**М.Я. Яковлев генерал-лейтенантăн автобиографийĕнчен**: «1944 çулхи декабрь уйăхĕнче мана 29-мĕш стрелковăй дивизин штаб начальникĕн çумне — оперативлă отделени начальникне лартрĕç. Çак должноçра эпĕ вăрçа вĕçлерĕм. М.В. Фрунзе ячĕллĕ Çар академине вĕренме кĕме рапорт çыртăм. Академирен 1948 çулта вĕренсе тухрăм та Воронежри çар округĕн оперативлă пайĕнче офицерта, каярах аслă офицерта службăра тăтăм, ун чухне Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕç.

1954–1956 çулсенче Генеральнăй штабăн Çар академийĕнче вĕрентĕм. Ун хыççăн — Тип çĕр çинчи çарсен Генеральнăй штабĕнче аслă офицер, пай начальникĕн çумĕ. 1963–1966 çулсенче — Арми штабĕн начальникĕн çумĕ, Туркестан çар округĕн штаб начальникĕн пĕрремĕш çумĕ — оперативлă управлени начальникĕ. Округри çарсене пĕлтерсе тăрас, вĕсене ертсе пырас ĕçре тĕпрен лайăхлатассишĕн нумай вăй хума тиврĕ. Çавăншăн мана 1967 çулта Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе виççĕмĕш хут наградăларĕç, генерал-майор ятне пачĕç.

1969 çултанпа Вăтам Азири çар округĕнче штаб начальникĕн çумĕнче, 1971 çулхи августранпа Германири совет çарĕсен ушкăнĕн штаб начальникĕн пĕрремĕш çумĕ пулса службăра тăтăм. 1974 çулта мана генерал-лейтенант званине панă. 1975 çулта СССР Хĕç-пăшаллă Вăйсен Генеральнăй штабĕн оперативлă Тĕп управленийĕн начальник çумне лартрĕç. 1977—1987 çулсенче — Генштаб Академийĕнче стратеги кафедрин начальник çумĕ. 1987 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнче отставкăна тухрăм. Академире ĕçленĕ чухне мана тата тепĕр Хĕрлĕ Çăлтăр, 1 степеньлĕ Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсене парса наградăларĕç. Çапла вара, манăн I степеньлĕ Тăван çĕршыв вăрçин орденĕсем иккĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсем тăваттă, медальсем пурĕ çирĕм виççĕ».

М.Я. Яковлев Мускаврa пурăннă. Унăн икĕ ывăлĕ те ашшĕ çулĕпе кайнă, çар çыннисем. Асли, Валерий — пĕрремĕш рангри капитан, Çурçĕр флочĕн штабĕнчи пай начальникĕ. Кĕçĕнни, Сергей — подполковник, танк полкĕн командир çумĕ. Хĕрĕ, Лариса, электронлă машиностроени институтĕнчен вĕренсе тухнă, Раççей Наукăсен академийĕн институтĕнче ĕçлет.

2015 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Кунцев масарĕнче, тăххăрмĕш çар участокĕнче пытарнă.

## *Библиографи:*


1. Прокопьев, В. Генерал-лейтенантăн фронтри çулĕ-йĕрĕсем / В. Прокопьев // Канаш тăрăхĕн ятлă–сумлă çыннисем. – Шупашкар, 2005. – С. 343–346.
2.
3. Бабанов, Н. Михаил Яковлевич Яковлев / Н. Бабанов // Урюм-река. – Чебоксары, 2013. – С. 146-147.

4. Степанов, В. Ф. Яковлев Михаил Яковлевич / В. Ф. Степанов, Н. Б. Малясова // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2011. - Т.4 С-Я. – С. 722, 723.

5. Степанов В. Ф. Отважный командир разведки / В. Ф. Степанов // Военачальники. - Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 2004. - С. 244-248.






Район тĕп библиотекин информацимпе библиографи пайĕ
Пухса хатĕрлекенĕ Л. И. Евгеньева
Тел. 49-7-00, e-mail: library@kanash.cap.ru



**Канаш районĕн тĕп библиотеки**
**Информаципе библиографи пайĕ**


# Хисеплĕ паттăр ентеш
## *Михаил Яковлевич Яковлев*



**(1921-2015)**


**Шăхасан сали**
**2021 ç.**

## *Генерал-лейтенантăн фронтри çул-йĕрĕсем*

Тăван çĕршывăн аслă вăрçин пĕрремĕш кунĕнчен пуçласа мĕн Çĕнтерӳ кунĕччен фронтра çапăçнă, каярахпа та пурнăçне Раççей Хĕç-пăшаллă Вăйĕсене çирĕплетме халаллана ентешĕмĕрсенчен пĕри — Михаил Яковлевич Яковлев генерал-лейтенант.

М.Я. Яковлев 1921 çулхи июнĕн 5-мĕшĕнче Сив Çырма ялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Амăшĕ, Варвара Алексеевна, 1928 çул-та çĕре кĕнĕ.

Тăван ялĕнче пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Миша Вăрăмпуçĕнчи тулли мар вăтам шкула çӳреме пуçлать. Хĕлле вăл кунта кукамăшĕ патĕнче пурăнать, ытти чухне киле куллен 12 километр утать. Ун хыççăн хăйсемпе кӳршĕллĕ Йĕпреç районĕнчи Хурамалти вăтам шкулта пĕлĕве ӳстерет. 1938 çулта алла аттестат илсен Хусанти медицина институтне вĕренме кĕмешкĕн экзаменсем тытма тухса каять, анчах кирлĕ чухлĕ балл пухаймасть. Шупашкара таврăнать, ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. 1939 çулта ăна Хĕрлĕ Çар ретне илеççĕ, пехота училищине вĕренме яраççĕ. Ăна Львов хулинче йĕркеленĕ пулнă, кайран Житомир облаçне куçарнă, Киров хулинче 1941 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнче вĕренсе пĕтернĕ. Июнĕн 17-мĕшĕнче вăл служба вырăнне — Каменец-Подольский хулине пырса çитет. М.Я.Яковлев — пулемет взвочĕн командирĕ.

Тăван çĕршывăмăр çине гитлерла Германи вăрă-хурахла тапăнса кĕрсен Яковлевсен подразделенийĕ пĕр эрне хушши Прут юханшывĕ хĕррине румынсен атакисене сире-сире ярать. Унтан, нумай вăхăтлăха тунă сооруженисем фашистсем талпăнса пынине чарса лартмашкăн пулăшасса шанса, тăтăшах контратакăласа каялла чакать.

Июль варринче М.Я.Яковлева стрелковăй рота командирĕ, каярахпа батальон штабĕн начальникĕ пулма уйăрса лартаççĕ. Августăн 18-мĕшĕнче хĕрӳ çапăçусенчен пĕринче ăна кăкăртан, хулран тата пĕçĕрен амантаççĕ, 1941 çулхи сентябрь пуçламăшĕнче Красный Лиманри эвакогоспитале илсе çитереççĕ.

**М.Я.Яковлев автобиографийĕнчен**: «1941 çулхи октябрь çурринче мана çине тăрса ыйтнăран госпитальрен кăларчĕç. 21-мĕш армин запасри полкĕ çумĕнчи сывалакансен батальонне çитрĕм. Унтан мана штаб начальникĕсен разведка енĕпе ĕçлекен помощникĕсен висĕ уйăхлăх курсне вĕренме ячĕç. 1942 çулхи март уйăхĕн вĕçĕнче кăна манăн малти рете таврăнма май килчĕ, мана НКВДăн чикĕри çарĕсен механизациленĕ дивизийĕн полкĕнчи разведчиксен ротин командирне лартрĕç. 21-мĕш арми малтан Кăнтăр-Хĕвеланăç, унтан Воронеж тата Дон фрончĕсене кĕнĕ...»

1942 çулхи июнь пуçламăшĕнче пысăк çухатусем тӳссе дивизи Дон çывăхне чакать. М.Я. Яковлев офицерăн çапăçури ăсталăхĕ ӳссе пыни Дон юханшывĕ урлă каçса Клецкий районĕнче плацдарм тытса илнĕ чухне, унтан контрнаступление куçсан уйрăмах лайăх палăрать.

Ытти воинсемпе пĕрле пирĕн ентеш те, çак вăхăт тĕлне капитана çитнĕскер, тӳснĕ, чăтнă, фашистсене хирĕç пĕтĕм курайманлăхпа çапăçнă. Хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе награлăлаççĕ. Кăшт каярахпа унăн кăкăрĕ çинче «Сталинграда хӳтеленĕшĕн» медаль ялкăшма тытăнать.

52-мĕш гварди дивизине (63-мĕш стрелковăй дивизи пулнă) Белгород çывăхне куçараççĕ, унта хĕрлĕ армеецсем 1943 çулхи март уйă-хĕнчен пуçласа июньччен оборона тытаççĕ. Михаил Яковлевич 151-мĕш гварди стрелковăй полкĕнче разведка начальникĕ пулнă май полк командованине разведка даннăйĕсемпе вăхăтра тивĕçтерсе тăрать.

Гитлеровецсем сасартăк наступлени пуçарса ярсан М.Я. Яковлев ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ нейтральнăй тăрăха — икĕ вут хушшине лекет. Телее, сывă юлаççĕ.

**М.Я. Яковлев автобиографийĕнчен**: «Вилĕмпе куçа-куçăн тăнă самантсем миçе хутчен пулман-ши манăн вăрçă çулĕсенче! Разведкăран чĕрĕ таврăнайăн е çук — малтанах ăçтан татса калăн-ха. Шанăç — хăвăнта, юлташусенче. Чи кăткăс, чи йывăр лару-тăрура та çухалса каймалла мар. Шикленсе ӳкрĕн — пуç пĕтрĕ тесех шутла...

Мана дивизин разведка уйрăмĕн начальникĕн пулăшаканĕ пулма уйăрса лартсан иккĕмĕш хут амантаççĕ. Сипленнĕ хыççăн 29-мĕш стрелковăй дивизие штабри оперативлă уйрăмĕн начальникĕн пулăшаканĕ пулма куçараççĕ. Çак должноçра манăн «Багратион» операцие хутшăнмалла пулчĕ, командованин ответлă, чылай чухне пурнăçшăн хăрушă заданийĕсене пурнăçлама тиврĕ. Тăтăшах сăнав пунктĕнче пулса, гитлеровецсен чаçĕсем ăсталла кайнине тишкермелле кăна мар, çĕнĕрен пырса çитнĕ подразделенисем умне оперативлă заданисем лартмалла. Вĕсемпе пĕрле хам та тăшмана пĕтерме хутшăннă...»

Гвардин 6-мĕш армин командующийĕн 1944 çулхи августăн 30-мĕшĕнчи приказĕпе М.Я. Яковлев гварди капитана хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Тăван çĕршыв вăрçин I степеньлĕ орденĕпе награлăланă, 302-мĕш стрелковăй полкăн штаб начальникне лартнă. Çав вăхăтра 6-мĕш гварди армийĕ (малтан 21-мĕш арми пулнă). 1-мĕш тата 2-мĕш Прибалтика фрончĕсен составне кĕнĕ, тăшманăн Балтика тăрăхĕнчи пысăк ушкăнне Кенигсберг çывăхĕнчи тĕп вăйсенчен уйăрса ярас тесе хастаррăн çапăçнă.